**“Радиохум – хаçат страницинче: ача шăпи – ашшĕ-амăшĕн аллинче”**

# Мĕне кĕтсе хытаççĕ чунăрсем?..

**Пăхăр-ха сăнасарах тавраналла. Улмуççисем шап-шурă çеçкере. Шур пĕркенчĕк тăхăннă çĕмĕртсемпе шурă-кăвак сиреньсен асамлă шăрши сарăлнă. Çак илеме курма пултарни, çĕр çинче пурăнни хăй кăна мĕн тери пысăк телей иккен вăл. Пурнăçпа савăнса пурăнмалла пек. Шел, тепĕр чух çамрăксем, пурнăçа ăнланманран-ши, шутламан утăм тăваççĕ. Çитĕннисен пĕлсе тăнă çĕртех хăйсен пурнăçне пăснине вара мĕнпе ăнлантармалла-ши? Хăйсенне кăна-ши? Ачисен пурнăçне те хăйсемех авса-хуçса хураççĕ вĕсем. Йăлтах аслисенчен килет пурнăçра. Урăхла пĕтĕмлетӳ тума пулмарĕ тунти кун пулнă район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи профилактика енĕпе ĕçлекен комисси (унта Катькас, Ильинка, Турай ял тăрăхĕсенче право йĕркине пăсассине, преступление хирĕç кĕрешессипе тата тавралăха тирпей-илем кĕртессипе епле ĕçленине, ачасемпе çул çитмен çамрăксен çуллахи канăвне йĕркелессипе тата çул çинчи хăрушсăрлăх ыйтăвне пăхса тухрĕç), унтан маларахах пулса иртнĕ çул çитмен çамрăксемпе вĕсен прависене хӳтĕлессипе ĕçлекен комисси (Мăн Сĕнтĕр, Москакасси, Ильинка, Москакасси , Çатракасси ял тăрăхĕсенчи çул çитмен çамрăксем йĕркене пăснине тишкерчĕç) ларăвĕсем хыççăн.**

Калаçăва вара район пуçлăхĕн Ю. А. Ивановăн сăмахĕсенчен пуçлас килет.

– Пĕтĕм инкек эрехрен пуçланать, – терĕ вăл профилактика комиссийĕн ларăвне ертсе пынă май.

Çӳлерех асăннă ял тăрăхĕсенче çеç мар, кашни ялтах пур паян ачисем пирки шутличчен алла черкке иленсем. Çавна пула çитĕннисен аллисенчен вĕçерĕннĕ ачасем. Шкулта та вĕрентекенсем ăнăçсăр çемьесенчи ачасемпе ĕçлеççĕ, ял тăрăхĕсенчи профилактика канашĕн ларăвĕсенче те пăхса тухаççĕ вĕсен ашшĕ-амăшĕсене. Анчах та ашшĕ-амăшĕсем хушшинче ача çуратсан ĕç вĕçленет текен шухăша улăштарманнисем те çук мар-ха.

Çул çитмен çамрăксемпе вĕсен прависене хӳтĕлессипе ĕçлекен комисси ларăвне (ăна унăн председателĕ, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертӳçи А. Е. Андреева ертсе пычĕ) чĕннĕ 30-тан кăшт иртнĕ мăшăрсем куç умĕнчен каймаççĕ. Ачалăха хӳтĕлессипе ĕçлекен И. С. Кабуркина сăмахĕсем те хăлхарах:

–Эпир пырса кĕнĕ чух вĕсен патĕнче килте пĕр уйăх йĕрке туман лару-тăруччĕ. Аçта кăна пулман, кун пек тирпейсĕр çурт курман, – терĕ вăл чунĕ тăвăлнине пытараймасăр. – Пушă сăра-эрех кĕленчи выртман пĕр кĕтес те юлман килĕнче.

Ачасем пирки шутлакан амăшĕ мăшăрĕпе килти кашни ĕçе эрех ĕçнипе вĕçлесен, ăçта çитсе тухмалла-ши? Мĕн ыррине курса ӳсес çав çемьери ачасен? (Кĕçнерни кун комисси членĕсем ку çемьере пулса курчĕç: лару-тăру кунта лайăх енне улшăнни куçкĕретех. Килте тирпейлĕ, йĕркеллĕ).

Воспитани вăчăринчи хăш пайне тата хăçан çухатнă-ши Ильинка ял тăрăхĕнчи амăшĕ? 7 класра вĕренекен ача ват çын пек пирус (амăшĕн сăмахĕсем тăрăх) мăкăрлантарнин, килтен тухса кайса çӳренин, шкула çӳременнин сăлтавĕсене паянхи кунра çеç шырани тĕрĕс-ши? Çук пулĕ. Амăшĕ тепĕр чух алла черкке илнинчен пуçланман-ши вăл хăйĕн ачи умĕнче куçран ӳкни? Тен, пурнăçа çĕнĕрен йĕркелеме хăтланса мăшăрланнă чух малтан çуратнă ача пирки ытлашши шутламаннинче те пулĕ паян арçын ача амăшне, амăшĕн мăшăрне итлеменнин сăлтавĕ.

–Мĕн тăвас ман тата эс йĕркеллĕ ача пул тесе, – куççуль витĕр пĕтĕм чунĕнчен тăвăлса калаçать хĕрарăм. – Хам талăксерен ĕçре. Мăшăр сан ачу каллех таçта тухса кайрĕ, тесе шăнкăравлать ман пата. Кăкарса хумалла-им ман сана?

Сан ача... Ман ача... Çав “пирĕн ача” тесе калаттаракан чун ăшшине вăхăтра илсе çитерейменнинче маршши çак çемье инкекĕ?

Пирĕнтен кашниех телейлĕ пуласшăн. Кăна ăнланмалла. Анчах та хăй çуратнă ачана хăйĕн амăшĕпе пăрахса хăварса тепĕр çĕрте çавăрнă çемьере телейлĕ тупма пултарать-и хĕрарăм? Ун пеккисем те пур.

Хам пата пырса пурăн тесе эпĕ ăна. Пымастăп, тет, - хăйне тӳрре кăларма тăрăшнăн илтĕнчĕç тепĕр çамрăк хĕрарăмăн сăмахĕсем.

Мăшăрланнă чух ывăлне пĕрле илсе кайнă пулсан, аслă класра вĕренекен ачи паян “2” паллăсемпе туслашнă, уроксене сиктернĕ пулĕччĕ-ши? Е пĕчĕк ачасене пăрахса хăварнă чух вĕсемпе пĕрле проблемисем те ӳсесси пирки шутлама вăхăт пулман-ши? Çакăн результачĕ вара куç умĕнче. Кукамăшĕ аякка ĕçлеме кайнă вăхăтсенче пĕччен юлакан ача хăй пĕлнĕ пек пурăнма хăнăхнă.

Эх, эпир те çав аслисем. Пĕрисем телей шыраççĕ, теприсем эрех ĕçеççĕ. Ачасен, вĕсен вара мĕн тумалла? Кам парĕ вĕсене юратупа чун ăшшине? Кам хăтарĕ ытлашши шухăлансан, кам каçарĕ малтанхи йăнăшшăн? Хăйсен ашшĕ-амăшне те кирлĕ мар иккен кун пек çемьесенчи ачасем. Юрать-ха ырă чунлă асанне-кукамайсем пулсан. Катькас ял тăрăхĕнче те пур вĕсем. Пĕр çемйин икĕ ачи те интернатра, çаплах эрехпе шĕвет ашшĕ-амăшĕ. Юрать-ха, теприсен асламăшĕ ваттисен çуртĕнчен каялла киле таврăнчĕ. Ара, мăнукĕсем выçă ларни çинчен пĕлсен чăтса тăраймарĕ вăл. Пенси укçи тăван тĕпренчĕкĕсем валли те çитĕ, терĕ.

– Çакăн пек ашшĕ-амăшĕсемпе пурăнтариччен вĕсене туртса илни лайăхрах та пулĕ. Ачасемшĕн, – Юрий Александровичăн çак сăмахĕсем тĕрĕс пулнине паян эрехпе иртĕхекен çемьесенчи ачасен телейсĕр шăпи тепĕр хут çирĕплетет.

Халĕ, акă, çуллахи каникул çитсе килет. Вăл пур ачашăн та хаваслă иртĕр тесе район администрацийĕ хăйĕнчен килнине йăлт тăвать. Район пуçлăхĕ Ю. А. Иванов профилактика комиссийĕн ларăвĕнче “йывăр” ачасемпе ăнăçсăр çемьесенчи ачасене пурне те çуллахи вăхăтра районта йĕркеленекен лагерьсене çӳретмеллине палăртрĕ. Канăва усăллă тата хаваслă ирттерниле пĕрлех вĕсем тутă та пулаççĕ.

Районти вĕрентӳ, çамрăксен политики, физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçи Л. И. Мочалов ларура каланă тăрăх, районта ĕçпе кану, шкулсем çумĕнчи, профиллĕ, сывлăха çирĕплетмелли лагерьсем йĕркеленеççĕ, вĕсенче кунне иккĕ çитереççĕ.

Ларура çавăн пекех район пуçлăхĕ ялта спирт пур пăтранчăк шыв туса сутакансемпе кĕрешес ĕçе вăйлатмаллине палăртрĕ. Çынсен инкекĕ çинче “бизнес” тăвакансен списокĕсем кашни ял тăрăхĕнчех пур. Вĕсене саккунпа килĕшӳллĕн явап тыттарас ĕçе общественность хутшăнни, милицин участокри уполномоченнăйĕсен ĕçне лайăхлатни пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Чăннипех те, мĕн пур инкек эрехрен пуçланать: çемьери харкашу, ачасем килте выçă ларни. Тата та хăрушăраххи – эрехе пулах миçе пурнăç татăлать паян районта? Миçе ача тăлăха юлать? Нумаях пулмасть Муркашран пушар машини чĕрене кăшкăртса тухса кайнă сасă паян та чунчĕрене тăпăлтарать: вутра икĕ çитĕннĕ çынпа пĕрле 3 çула та çитмен ача пурнăçĕ татăлчĕ. Каллех çитĕннисен айăпне пула... Каллех эрехе пула...

Тата мĕн, мĕнле инкек кĕтсе алăсем эрех черкки еннех тăсăлаççĕ... Арçынсен... Хĕрарăмсен... Эрех мăшкăлĕ пулма çуралман вĕт-ха никам та. Ăнланасчĕ çакна. Çĕр çине ырă ĕç тума килет кашни çын. Ырă тăвасчĕ пĕр-пĕрне. Хăв çуратнă ачасене те пулин куççулĕ пиллес марччĕ...

**Л. ТУКТИНА.**




**Православи чиркӳ уявĕсем**

# Ыран – Çимĕк

Халăх календарĕнче çак уяв пĕр-пĕрне килĕштерессипе, аслисене сума сăвассипе, чечекленекен тавралăха ырлассипе çыхăннă. Çак аталанупа чечекленĕвĕн символĕ Раççейре çамрăк хурăн шутланнă.

Çимĕк умĕнхи шăмат куна Ашшĕ-амăш шăмат кунĕ тенĕ. Вăл çĕре кĕнĕ тăвансемпе çывăх çынсен килĕшӳпе çураçу кунĕ шутланнă. Ашшĕ-амăш шăмат кунĕ валли çăмартасем сарă тĕспе сăрланă, икерчĕ, кĕсел, пыл, пĕремĕкĕсемпе печенисем тата ытти тутлă апат-çимĕç хатĕрленĕ. Çак апат-çимĕçпе масарсем çине кайса вилнисене асăнмалла пулнă.

Çак шăмат кун шыв тĕлĕшпе уйрăмах тимлĕ пулнă, урай е кĕпе-йĕм çума та, мунча хутма та юраман.

Вырсарни кун вара – Çимĕк уявĕ. Çак кун йывăççене касмахуçма юрамасть. Хĕрсемпе хĕрарăмсем уява хатĕрленсе капăр çи-пуç тумланнă. Хитре тутăрсемпе ată-пушмак туяннă.

Карталанса тăрса вăйăсем ирттернĕ. Унта пĕтĕм ял çынни хутшăннă. Каçалапа унччен хатĕрленĕ чечек кăшăлĕсене юхан шыва пăрахнă. Енчен те вăл ишсе каять пулсан, телей пуласса кĕтсех тăр. Пĕр вырăнта çаврăнма тытăнать е путать пулсан вара çемьере харкашу пулĕ, çак çул качча тухасса е авланасса ан та шутла.

Çветтуй çимĕк кунне çавăн пекех Çветтуй Сывлăш апостолсем çине аннă кун тесе палăртаççĕ. Мĕншĕн тесен шăпах çав кун Çветтуй Сывлăш çулăм чĕлхи евĕрлĕ пулса апостолсем çине аннă теççĕ.


## Пĕлтерӳсем. Объявления

**Администрация Моргаушского района объявляет прием заявок на размещение торговых точек в день проведения районного праздника «Акатуй», который состоится 10 июня 2007 года на Ландышской поляне.**

**Торговые места будут представляться на следующих условиях:**

**1. Осуществление торговой деятельности с торговой палатки.**

**2. Праздничное оформление торговой точки.**

**3. Наличие урны для твердых отходов.**

**4. Наличие оформленной заявки.**

**Плата за земельный участок составит 80 рублей за 1 квадратный метр. Количество торговых мест ограничено.**

**Заявки принимаются с 24 мая по 05 июня 2007 года в отделе имущественных и земельных отношений администрации Моргаушского района (кабинет № 312) с 9.00 до 16.00 часов ежедневно, кроме выходных дней. Обеденный перерыв с 12.00 до 13.00 часов, телефон для справок 2-12-66.**

РЕСПУБЛИКАНСКИЙ СОЮЗ КРЕДИТНЫХ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИХ КООПЕРАТИВОВ ГРАЖДАН

ПРЕДОСТАВЛЯЕМ КРАТКОСРОЧНЫЕ

ЗАЙМЫ

ПРИНИМАЕМ НА ХРАНЕНИЕ

СБЕРЕЖЕНИЯ

14 - 30 % ГОДОВЫХ

Наше представительство в с. Моргауши
филиал КПКГ “Агрокредит”:
ул. 50 лет Октября, д.23, тел. 2-18-13

Услуги предоставляются пайщикам кооператива

**Продаю скутер из Японии.
Телефоны: 8-905-347-80-21, 30-3-50.**

**Продаем цемент, шифер семиволновый, восьмиволновый, плоский, рубероид, лаки, краски, обои. Обращаться: с. Моргауши, магазин «Рука мастера».
Тел.: 8-903-346-40-58. 1-5.**

**Требуются рабочие на постоянную работу в мебельное производство. Зарплата от 4 тыс. рублей.
Тел.: 8-906-389-10-83. 1-2.**

**Меняю четырехкомнатную квартиру в г. Козловка (дом кирпичный, телефон, рядом усадьба с кирпичным сараем) на квартиру или дом в с. Моргауши.
Тел.: 44-01-68, 8-903-358-01-68. 1-4.**

**Доставка красного и силикатного кирпича, цемента из завода.
Телефон: 8-903-065-58-68. Цены договорные. 1-5.**

**СПУТНИКОВОЕ ТЕЛЕВИДЕНИЕ
любой сложности, от 3000 рублей, с установкой. Триколор – 5000 руб.
Тел.: 8-906-385-29-30. 7-8.**

**БЫТОВАЯ ТЕХНИКА
по оптовым ценам на заказ:
телевизоры, холодильники, СВЧ-печи, стиральные машины, электроинструменты, пылесосы, мотоблоки и многое другое.
Тел.: 8-906-385-29-30. 7-8.**

**Продаю межкомнатные, стальные двери, решетки, ограды, пластиковые окна. Корпусная мебель на заказ. Кованые изделия.
Телефон:8-927-841-67-31 (Алексей).**

**Прошу откликнуться тех, кто видел серо-дымчатую кобылку двух лет и позвонить по тел.: 34-2-56, 8-917-659-44-39, 8-960-305-87-54. Обращаться по адресу: выселок Коминтерн, 10. Ивановой Марине. Вознаграждение гарантирую.**


СПК-племзавод «Свобода» правленийĕ хуçалăхри пенсионерка, ĕç ветеранĕ **Васса Матвеевна НИКОЛАЕВА** вилсе кайнă пирки унăн çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркаш райпо коллективĕ Хуракасси выççăлккинче магазин заведующийĕ пулса ĕçлекен Е.А. Алжирован **АМĂШĔ** вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.


**ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”**
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"

УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.

**Директор-главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: **morpress@cbx.ru**

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу.
Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

**Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,5 п. листа. Тираж 3511.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 25.05.2007 г.
Заказ
Дежурный по номеру БЕЛОВ А.П.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.**

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан (вкладыши - в ГУП “Моргаушский издательский дом”) в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.